# Уяв ячĕпе, хаклă хĕрарăмсем!


Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерÿ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

15 (7759) № ✻ Шăмат кун, 2010 çулхи мартăн (пуш) 6-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


Мартăн 8-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ

## Çуркунне чĕречерен шаккать



*Муркашри вăтам шкулăн кĕçĕн класĕсенчи 274 ачана вулама-çырма хăнăхтарассипе 12 вĕрентекен тимлет. Ĕçе РФ Президенчĕ палăртнă «Вĕрентÿ» наци проекчĕпе килĕшÿллĕн йĕркелесе пыраççĕ вĕсем. Аслă категориллĕ вĕрентекен В.В. Смирнова иртнĕ вĕренÿ çулĕнче Раççей Перезиденчĕн грантне тивĕçни, пĕрле тăрăшакан Л.С. Тихонова, Н.К. Чернова, Т.Ф. Иосифова, Л.Л. Гаврилова, М.А. Ефремова, З.И. Матвеева, И.А. Степанова, В.В. Романова, М.М. Ефимова, Т.Ю. Крючкова, Э.А. Никитина вĕрентекенсем вĕрентÿ процесĕнче малта пыракан технологисемпе (компьютерсем, интерактивлă доска, çĕнĕ кăтарту пособийĕсем) усă курни ачасен пĕлÿ шайне çÿллĕ ÿсĕмре тытма пулăшать. Çавăнпа ĕнтĕ вĕренекенсенчен ытларахăшĕ «4» тата «5» паллăсемпе ĕлкĕрсе пырать.*

*А. БЕЛОВ сăн ÿкерчĕкĕ.*

**ЧĂВАШ ЕНĔН ЮРАТНĂ ХĔРАРĂМĔСЕМ!**

Сире Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Çурхи тапхăра эпир, йăлана кĕнĕ тăрăх, хĕрарăмсене халалланă уяв кунĕпе кĕтсе илетпĕр. Сирĕн вăй-хал парса тăракан илемлĕхпе шайлашулăх, ырă кăмăлпа сисĕмлĕх туйăмĕ тавралăха янкăр çĕнĕ сăнсем парнелеççĕ. Сирĕн виçесĕр юратăвăр – хаклă халал. Вăл çынсене савăнăçпа телей парнелет, йывăр вăхăтра пулăшать, çĕнĕ чикĕсем çĕнсе илме хавхалантарать.

Ĕçри пуçарулăх, кирек епле самантра та тĕрĕс йышăну тума пĕлни, кăмăл çирĕплĕхĕ тата палăртнă тĕллев патне ăнтăлни – çак пур пахалăх енĕсем те хĕрарăмсене хальхи вăхăтра тĕрлĕрен професси отраслĕсенче пысăк çитĕнÿсем тума май параççĕ. Эсир политикăпа общество ĕçĕ-хĕлĕнче те, наукăпа производствăра та, социаллă сферăпа патшалăх службинче те палăрса тăратăр. Уйрăммăн çавна та палăртмалла: çулсеренех бизнес-ледисемпе хĕрарăм-ертÿçĕсен хисепĕ ÿссе пырать. Вĕсем ăнăçу çулне çирĕппĕн алла илеççĕ.

Хаклă аннесемпе асаннесем, юратнă мăшăрсемпе хĕрĕмĕрсем, аппасемпе йăмăксем тата хĕр-юлташсем. Çепĕçлĕхпе тимлĕхшĕн, чăтăмлăхшăн тата йывăрлăхсене пирĕнпе пĕрле пайланишĕн, яланах пулăшма тăрăшнишĕн тата тĕрек пулса тăнишĕн сирĕн умăрта пуç таятпăр. Пурсăра та çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, телей тата юрату сунатăп!

**Н. ФЕДОРОВ, Чăваш Республикин Президенчĕ.**

**ХИСЕПЛĔ ТЕ ХАКЛĂ ХĔРАРĂМСЕМ!**

Сире çывхарса килекен çуркуннехи пĕрремĕш уявпа – Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Çуркунне çут çанталăк чĕрĕлет, Çĕр-аннемĕр сĕткенĕпе вăй илсе, пĕтĕм тĕнче чуна çĕклет. Хĕрарăм та çавăн пекех: ачисене кун-çул парнелет, пурнăçа малалла тăсать. Вĕсене пурнăç çулĕ çине кăларассишĕн канăç мĕнне пĕлмесĕр тимлет. Çĕр çинче мĕн пур ырри, асамли, сăмахпа каласа ăнлантармалла мар илем те сирĕн ятăрпах çыхăннă. Эсирех – çуркунне палли те, ырлăхпа лăпкăлăх та, чунчĕре ăшши те, çепĕçлĕх çăл куçĕ те. Çемьери телее те эсирех кÿретĕр. Эпир çакна яланах асра тытатпăр, çакăншăн сире тав тăватпăр.

Çав вăхăтрах сирĕнте, ытарайми илемлĕ хĕрарăмсем, нимпе танлаштарма çук çирĕплĕх, çивĕчлĕх тапса тăрать. Аслă Çĕнтерÿ 65 çул тултарнă май Аслă Отечественнăй вăрçăра тунă Аслă Çĕнтерÿшĕн сирĕн умăрта çĕре çити пуç таятпăр, хисеплĕ тыл ĕçченĕсем. Эпир сирĕн умăрта ĕмĕр парăмра.

Паян та, кирек хăш ĕçре вăй хурсан та, кирек хăш отрасльте тăрăшсан та, ĕçченлĕхпе, пултарулăхпа тата тăрăшулăхпа палăрса тăратăр. Хĕрарăмсăр, унăн çепĕç алли перĕнмесĕр пурнăçланакан ĕç çук та пулĕ паян. Йывăрлăх та чăрмав мар сирĕншĕн: пуç усмасăр çĕнтерсе пыратăр вĕсене. Район аталанăвĕшĕн ырми-канми тăрăшатăр. Тавах сире çакăншăн.

Пĕтĕм чун-чĕререн сире çирĕп сывлăх, телей, шанчăк, ĕненÿ, юрату сунатăп. Ĕçĕрсем те ăнса пыччăр, ĕмĕтĕрсем çитсе пыччăр, шухăшлани пурнăçа кĕтĕр. Сирĕн сăн-питĕрте яланах йăл кулă çиçтĕр. Çемйĕрти ăнлану пурăнма вăй-хал патăр, пурнăçăр çулĕ уçăлсах пытăр. Ачăрсем яланах савăнăç кÿччĕр, вĕсен пурнăçĕ те ăнсах пытăр.

**Ю. ИВАНОВ, район пуçлăхĕ.**

Уяв умĕнхи интервью

## Пурнăç пуçламăшĕ те, илемĕ те, шанăçĕ те санрах...

***Кашни уяв хăйне майлă илĕртÿллĕ. Кĕçех Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ çитет. Çут çанталăк хĕрарăма пархатарлă тивĕç парнеленĕ: вĕсем – ача амăшĕсем. Хăйсем пурнăç парнеленĕ ывăл-хĕрĕсем ырă-сывă ÿсчĕр тесе миçе каç çывăрмасăр ирттернĕ-ши? Хăйсен тĕпренчĕкĕсене пурнăçăн тĕрĕс çулĕ çине тăччăр тесе вăй-халне шеллемеççĕ. Вĕсем çитĕнсессĕн те лăпкă мар амăш чĕри: вăл ачисемшĕн, вĕсен савăнăçĕ-хуйхипе пурăнать. Çакăнпа пĕрлех хĕрарăмсем хăйсен ĕç вырăнĕнче те чунне парса тăрăшаççĕ. Обществăлла ĕç валли те вăхăт тупаççĕ. Çакăн пек ытарайми илемлĕ чун-чĕреллĕ, пултаруллă хĕрарăмсем çинчен пулĕ паян сăмахăмăр. Калаçăва вара район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе, районти хĕрарăмсен Канашĕн ертÿçипе А.Е. АНДРЕЕВАПА йĕркелерĕмĕр.***

**– Алевтина Евстафьевна, хĕрарăм вăл, чи малтанах, ача амăшĕ. Сăмахăмăра çакăнтан пуçлани вырăнлă пулĕ.**

– Чăннипех те, анне ятне илтме тивĕç пулни мĕн пысăкăш телей вăл хĕрарăмшăн, çав вăхăтрах пысăк яваплăх та. Ача амăшĕсен тивĕçĕ мĕн тери сумлă тата çăмăл мар пулнине правительствăра та, обществăра та лайăх ăнланаççĕ. Ача амăшĕн капиталне туса хуни, ачашăн тÿлекен пособисен виçисем çулсеренех хăпарса пыни те çакăн çинченех калать. Çакăн витĕмĕ те çук мар. 2009 çулта пирĕн районта 2008 çулхинчен 7 ача ытларах – 407 ача çуралчĕ.

Пĕтĕмпе вара пирĕн районта ачаллă çемьесем пĕтĕмпе 4596. Вĕсенче 7328 ача çитĕнет. Пĕтĕм çемьерен нумай ачаллисем – 442. Вĕсенче вара 1426 ывăлпа хĕр çемье ăшшине туйса, туслăх мĕн иккенне пĕлсе ÿсет. Амăшĕн чĕри вара кашни ачинех пĕр пек юратать, кашнин валлиех çитет унăн чун ăшшийĕ.

Паян уйрăмах ют çемьери ачасене хăйсен хÿттине илнисене чĕререн тав сăмахĕ калас килет. 76 ача паян опекунсемпе пурăнать. Тĕрлĕ сăлтава пула тăван ашшĕ-амăшĕн ăшшине туйса ÿсме май килмерĕ вĕсен, халĕ вара вĕсем 61 килте çемье ăшшине туйса илчĕç. Е тата пачах ют ачасемшĕн ашшĕ-амăшĕ пулса тăнисене илер. Районти 11 çемье паян 15 ачана пурăнма илчĕ. Çĕр çинчи чи сывăх çынсенчен кĕтсе илеймен юратăва туйса илчĕç вĕсем çак çемьесенче. Таймапуç вĕсене çак пархатарлă утăмшăн.

**– Хĕрарăм килте те пĕтĕм ĕçе туса ĕлкĕрет. Ĕçре те вĕсем малта пыраççĕ.**

– Район аталанăвĕнче хĕрарăмсен тÿпи те çителĕклех. Хаяр вăрçă вăхăтĕнче хĕрарăмсем упăшкисемпе ывăлĕсене вăрçа ăсатса, тылра пĕтĕм ĕçе хăйсем туса пынă. Çавăнпа та Аслă Çĕнтерÿ 65 çул тултарнă май вăрçă вучĕ витĕр тухнă, тылра çĕнтерĕве çывхартнă хĕрарăмсен ячĕпе уйрăмах тав сăмахĕ калас килет паян.

Çавăн пекех нумай çул хăйсен ĕç вырăнĕнче чунне парса ĕçленĕ, паян тивĕçлĕ канăва тухнă маттур хĕрарăмсене те ятранах асăнас килет. Социализмла Ĕç Геройне Ольга Федоровна Федорована паян районта пĕлмен çын çук та пулĕ. Çавăн пекех Муркаш райпо канашĕн ертÿçин çумĕнче ĕçленĕ Ефросиния Сергеевна Куликова, Перекет банкĕн Муркашри уйрăмне нумай çул ертсе пынă Харитиния Мироновна Тимофеева, районти централизациленĕ библиотека системине ертсе пынă Мария Васильевна Виноградова, районти вĕрентÿ пайĕн методпÿлĕм ертÿçи пулса ĕçленĕ Галина Захаровна Борисова, ача-пăча библиотекине нумай вăхăт ертсе пынă Анна Николаевна Николаева тата ыттисем халăх сумне тăрăшуллă ĕçпе çĕнсе илнĕ.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

### Саламлатпăр



Чи юратнă çыннăмăра – Çуткÿл ялĕнче пурăнакан **Анна Кирилловна ТИМОФЕЕВАНА** 75 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр, мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн, пире çитĕнтерсе тĕрĕс çул çине тăратнăшăн. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр, хамăра телейлĕ туятпăр, тайма пуç сана пуриншĕн те. Сывлăху сан çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр, сĕтелÿ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, ачусен, мăнуксен ырлăхне курса савăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрÿшĕсем, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**

Юратнă мăшăра, ырă кăмăллă аттене, кукаçие, хаклă тăванăмăра – Чуманкасси салинче пурăнакан **Владимир Валентинович ИВАНОВА** 50 çулхи юбилейпа чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Çирĕп сывлăхпа вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Мĕн ĕмĕтленни пурнăçланса, тăванусен ăшши хушăнса пытăр. Пурнăç çулĕпе утма вăй-халу çăл куç пек тапса тăтăр. Эпир сана юрататпăр, ырă кăмăлушăн тав тăватпăр.

**Салампа: мăшăрĕ, ачисем, кĕрÿшĕ, мăнукĕ, тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă мăшăрăма, ытарайми аннене, асаннене, ырă чунлă, тараватлă тăванăмăра – Ярославка ялĕнче пурăнакан **Ирина Борисовна САПОЖНИКОВАНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Аннемĕр! Юратнă çыннăмăр! Санăн ĕмĕрÿ вăрăм, сывлăху çирĕп пултăр, кĕрекÿ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр. Ачусен, мăнуксен ырлăхне курса савăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ачисем, 3 мăнукĕ, тăванĕсем.**

Йыхрав

## Черетлĕ лару – мартăн 11-мĕшĕнче

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн И.В. Николаевăн 2010 çулхи мартăн 3-мĕшĕнчи 38 № хушăвĕпе депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ 39-мĕш ларăвне 2010 çулхи мартăн 11-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче 10 сехетре пухма йышăннă.

Ларура пăхса тухма кун йĕркине çак ыйтусене кĕртме сĕннĕ:

1. Муркаш районĕнче ĕç условийĕсемпе ĕç сыхлавĕ 2009 çулта мĕнле шайра пулни пирки муниципаллă доклад çинчен.

2. Муркаш районĕнче преступленисем тăвассипе кĕрешессине вăйлатассипе 2007–2009 çулсем валли йышăннă комплекслă программăна мĕнле пурнăçлани çинчен.

3. Муркаш районĕн территорийĕнче пушар хăрушсăрлăхĕ мĕнле шайра пулни çинчен.

4. Депутатсен районти Пухăвĕн 2009 çулхи ноябрĕн 27-мĕшĕнчи С-36/2 № «Муркаш районĕн 2010 çулхи бюджечĕ çинчен» йышăнăвне улшăнусемпе хушăмсем кĕртесси çинчен.

5. Йăлари хытă каяшсене пухмалли, тиесе тухмалли тата утилизацилемелли нормăсене, район çыннисен йăлари хытă каяшсене тисе тухнăшăн тÿлемелли тарифсене çирĕплетесси çинчен.

6. Депутатсен Муркаш район Пухăвĕ çумĕнчи Çамрăксен парламенчĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен.

7. Депутатсен районти Пухăвĕн 2008 çулхи декабрĕн 5-мĕшĕнчи С-30/5 № «Муниципаллă харпăрлăхри çĕр участокĕсене арендăна памалли йĕркене çирĕплетесси çинчен» йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.

8. Пурлăха тÿлевсĕрех Муркаш районĕн харпăрлăхĕнчен Вырăс Православи чиркĕвĕн Шупашкарпа Чăваш Епархийĕн Муркаш районĕнчи Турай ялĕнчи Православи чиркĕвĕн Прихутне парасси çинчен.

Çавăн пекех кун йĕркине депутатсен районти Пухăвĕн 2008 çулхи апрелĕн 23-мĕшĕнчи С-25/3 № Чăваш Республикинчи Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн должноçне йышăнма конкурс ирттерессин йĕркин положенине улшăнусем кĕртесси çинчен тата ытти ыйтусене кĕртнĕ.